## Тракторист

Çурт умĕнче чие чечекленет,
Пыл хурчĕсем сĕрлеççĕ ун çинче.
Каç сулхăнĕ хуллен шуса килет,
Хĕрсен юрри юхать инçе-инçе.

Яра куна юрланă тăр-тăри
Каçалапа, чул пек, çĕре чăмать.
Яра куна ĕçленĕ тракторист
Ял еннелле пăхса темскер сăнать.

Вăл ывăнман, вăл такама кĕтет
Ĕç шавĕ май хăй тĕллĕн йăл кулса...
Апат кӳрет чипер хĕр йĕкĕте
Хĕвел анса ларас чух, каç пулсан.

Пике васкать, утти ун пит ĕлккен,
Çиçсе выляççĕ хăмăр куçĕсем.
Сăнне ăçтан, ăçтан кăна иккен
Илме пултарнă çакăн пек илем!

«Çисем, çисем...» – хуллен сĕнет пике,
Именнипе кăштах хăй пăрăнать.
Хĕре ытараймасăр пăхнипе
Çимесĕрех каччийĕ тăранать.

Каллех хирте мотор сасси кĕрлет,
Мĕн чухлĕ вăл сухалĕ çĕр каça!
Кĕçех, кĕçех, нумай вăхăт иртмест,
Кунта ешерĕ тинĕс пек калча...

Çурт умĕнче чие чечекленет,
Пике уçса ярать чӳречине...
Мотор шавне чун-чĕререн итлет,
Чĕреренех савать хăй каччине.

*Волкова, М. Тракторист / М. Волкова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 350.*